26-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
ФЕВРАЛЬ
23
ЮНКУН
38(6533) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн чыслӑхӗпе ирӗклӗхӗшӗн тата никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн, фашистла нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ паттӑррӑн кӗрешекен ҫӗнтерӳллӗ Хӗрлӗ Ҫар сывӑ пултӑр!

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Арми генералне МАЛИНОВСКИЕ

Украинӑри 3-мӗш фронт ҫарӗсем, наступлени туса пырса, паян, февралӗн 22-мӗшӗнче, КРИВОЙ РОГ хулине тата Кривой Рог рудникӗсен районне — Украинӑри пысӑк промышленность центрне, нимӗҫсен оборонин тӗреклетнӗ паха пунктне — штурмласа тытса илнӗ.

КРИВОЙ РОГ хулине тытса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче ГЛАГОЛЕВ генерал-лейтенантӑн, ШАРОХИН генерал-лейтенантӑн, КОТОВ генерал-майорӑн, КОСОБУЦКИЙ генерал-майорӑн, КУЗНЕЦОВ генерал-майорӑн ҫарӗсем, артиллери генерал-лейтенанчӗн НЕДЕЛИНАН, артиллери генерал-майорӗн АЛЕКСЕЕНКАН, артиллери генерал-майорӗн ХИТРОВСКИН, артиллери генерал-лейтенанчӗн ВОЗНЮКАН артиллеристчӗсем тата авиаци генерал-лейтенанчӗн СУДЕЦАН, авиаци генерал-майорӗн ТОЛСТИКОВАН летчикӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, КРИВОЙ РОГ хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чӑссене «КРИВОРОЖСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, февралӗн 22-мӗшӗнче, 22 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, КРИВОЙ РОГ хулине туртса илнӗ Украинӑри 3-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн Эсир ертсе пыракан мӗнпур ҫарсене, КРИВОЙ РОГ хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, ТАВ ТӐВАТАП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн пыракан кӗрешӳре вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи февралӗн 22-мӗшӗ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

1944 ҫулхи февралӗн 23-мӗшӗ. 16-мӗш №. Мускав хули.

Юлташсем — краскоармеецсемпе краснофлотецсем, сержантсем, офицерсемпе генералсем, партизансемпе партизанкӑсем!

Хӗрлӗ Ҫар 26 ҫул тултарнине пирӗн ҫӗршыври халӑхсем нимӗҫсен фашистла ҫарӗсене совет ҫарӗсем ҫӗнтерсе пынӑ историллӗ кунсенче кӗтсе илеҫҫӗ.

Ҫулталӑк ытла ӗнтӗ Хӗрлӗ Ҫар, гитлерла захватчиксен ҫарӗсене аркатса, вӗсене совет ҫӗрӗ ҫинчен шӑла-шӑла пӑрахса, ҫӗнтерӳллӗ наступлени туса пырать. Ҫав вӑхӑт хушшинче Хӗрлӗ Ҫар 1942—1943-мӗш ҫулхи хӗллехи кампание ӑнӑҫлӑн туса ирттерчӗ, 1943 ҫулхи ҫуллахи ҫапӑҫусенче ҫӗнтерчӗ тата 1943—44-мӗш ҫулхи хӗллехи ҫӗнтерӳллӗ наступление сарса ячӗ. Вӑрҫӑсен историйӗнче халиччен пулман ҫав кампанисенче Хӗрлӗ Ҫар, ҫапӑҫса пырса, вырӑнӗ-вырӑнӗпе 1700 километр таран хӗвеланӑҫнелле куҫрӗ, тӑшман тытса илнӗ совет ҫӗрӗн 3/4 пайне яхӑн тӑшмантан тасатрӗ.

Кӑҫалхи хӗллехи кампани вӑхӑтӗнче Хӗрлӗ Ҫар нимӗҫсен хӑватлӑ оборонине мӗнпур Днепр шывӗн тӑрӑхӗнче, Жлобинран пуҫласа Херсон патне ҫитиччен, пӗтерсе тӑкрӗ, ҫапла вара нимӗҫсем Совет Союзӗпе Германи фронтӗнче вӑраха тӑсӑлакан оборонӑллӑ вӑрҫа ӑнӑҫлӑн туса пыма ӗмӗтленнине ӳпӗнтерсе хучӗ.

Хӗллехи кампанин виҫӗ уйӑхӗ хушшинче пирӗн паттӑр ҫарсем Днепр шывӗн сылтӑм енчи Украинӑра ҫав тери пысӑк ҫӗнтерӳсем турӗҫ, Киев, Днепропетровск, Запорожье облаҫӗсене, пӗтӗм Житомир облаҫне, Ровно тата Кировоград облаҫӗсене пӗтӗмӗшпе тенӗ пекех, Винница, Николаев, Каменец-Подольск тата Волынь облаҫӗсен чылай районӗсене ирӗке кӑларчӗҫ.

Хӗрлӗ Ҫар татӑклӑн ҫапӑҫса пынипе Житомир, Кривой Рог тата Умань районӗсенче нимӗҫсем контрнаступлени тума хӑтланнине пӗтерсе лартнӑ. Совет ҫарӗсем, Корсунь-Шевченковский районӗнче нимӗҫсен 10 дивизине тата пӗр бригадине ҫавӑрса илсе пӗтерсе тӑкса, нимӗҫсемшӗн Днепр шывӗн сылтӑм енче ҫӗнӗ Сталинград туса хучӗҫ.

Совет ҫарӗсем Ленинград патӗнче аслӑ ҫӗнтерӳ турӗҫ. Пирӗн ҫарсем тӑшманӑн нумай вӑхӑтлӑха тата вӑйлӑн ҫирӗплетнӗ анлӑ оборонин хӑватлӑ системине ҫӗмӗрсе тӑкрӗҫ, нимӗҫ ҫарӗсен вӑйлӑ группине ҫапса аркатрӗҫ, Ленинград хулине тӑшман блокадинчен тата артиллерирен варвӑрла персе тӑнинчен пӗтӗмӗшпех ирӗке кӑларчӗҫ. Совет воинӗсем Ленинградпа Калинин облаҫӗсене фашистла ирсӗрсенчен тасатса ҫитерсе пыраҫҫӗ тата Совет Эстонийӗн ҫӗрӗ ҫине пырса кӗчӗҫ.

Оккупантсене Совет Белоруссийӗнчен массӑллӑн хӑваласа кӑларасси сарӑлса кайрӗ: Гомель тата Полесье облаҫӗсене пӗтӗмӗшпе тенӗ пекех, Могилевпа Витебск облаҫӗсен чылай районӗсене ирӗке кӑларнӑ.

Кӑҫалхи хӗлӗн лайӑх мар условийӗсенче пирӗн ҫарсем, тӑшман оборонин хӑватлӑ тӑрӑхӗсене ҫӗнтерсе, хӗллехи кампанин ВИҪӖ УЙӐХӖ ХУШШИНЧЕ совет ҫӗрӗн 200 пин тӑваткӑл километрне яхӑн захватчиксенчен тасатрӗҫ. Хӗрлӗ Ҫар халӑх пурӑнакан 13 пин пункта ытла, вӑл шутра 82 хулана тата 320 чугун ҫул станцине тӑшманран туртса илчӗ. Ҫӗнӗрен темиҫе миллион совет ҫыннине фашистсен пусмӑрӗнчен ирӗке кӑларнӑ. Чи кирлӗ ялхуҫалӑх районӗсене тата тимӗр рудипе марганец тӗлӗшӗнчен ҫав тери пуян промышленность районӗсене хамӑр Тӑван ҫӗршыв аллине тавӑрса панӑ. Нимӗҫсем вӑл районсемшӗн ҫав тери хытӑ тӑнӑ, вӗсем халӗ ӗнтӗ экономика тӗлӗшӗнчен паха пулса тӑракан ҫав районсене ҫухатрӗҫ.

Халӗ ӗнтӗ гитлерла Германи пӗр чарӑнаймасӑр пӗтсе ларасси патнелле пыни пуриншӗн те паллӑ пулма тивӗҫлӗ. Чӑн та, вӑрҫӑ вӑрҫмалли условисем Германишӗн ку вӑрҫӑра иртнӗ тӗнче вӑрҫинчи условисенчен чылай лайӑхрах. Унчухне Германи вӑрҫӑн малтанхи кунӗсенчен пуҫласа вӗҫне ҫитиччен икӗ фронтра кӗрешнӗ. Анчах та Германишӗн ҫак факт чылай пысӑк минус пулса тӑрать: Совет Союзӗ ҫак вӑрҫӑра кивӗ, патша Российӗ иртнӗ вӑрҫӑра пулнинчен нумай вӑйлӑрах. Тӗнчери пӗрремӗш вӑрҫӑра Германи блокне хирӗҫ икӗ фронтра 6 аслӑ держава—Франци, Россия, Англи, США, Япони тата Итали ҫапӑҫнӑ. Хальхи вӑрҫӑра Германи енне Италипе Япони куҫрӗҫ, фашистла блок ҫумне Финлянди явӑҫрӗ, иртнӗ вӑрҫӑра Германие хирӗҫ вӑрҫнӑ Румыни нимӗҫсем енне чупса каҫрӗ, ҫакӑнпа пӗрлех Германин тӗп вӑйӗсем паянхи куна ҫитсе те пӗр фронтра — Совет Союзне хирӗҫ кӗрешеҫҫӗ. Историрен ҫакӑ паллӑ: Германи, вӑл пӗр фронтра ҫапӑҫнӑ чухне, вӑрҫӑра яланах ҫӗнтернӗ, пачах та урӑхла, унӑн икӗ фронтра ҫапӑҫма лекнӗ чухне, вӑл вӑрҫӑра аяла пулнӑ. Хальхи вӑрҫӑра Германи хӑйӗн тӗп вӑйӗсемпе пӗр фронтра—ССР Союзне хирӗҫ ҫапӑҫать пулсан та, ҫӗнтерме пултараймарӗ кӑна мар, Совет Союзӗн хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсем хӑватлӑн пыра-пыра ҫапнипе пӗтсе ларасси патне пырса тӑчӗ. Совет Союзӗ пӗччен тӑрса ҫапӑҫса, Германин вӑрҫӑ машинин хӗснине тӳссе ирттерчӗ кӑна мар, нимӗҫсен фашистла ҫарӗсене татӑклӑ поражени те тӳстерчӗ пулсан, пирӗн союзниксен тӗп вӑйӗсем ҫапӑҫава кӗнӗ хыҫҫӑн тата гитлерла Германие хирӗҫ мӗнпур союзлӑ государствӑсен ҫарӗсем хӑватлӑн та ӳссех пыракан наступлени пуҫласа янӑ хыҫҫӑн вара, гитлерла Германин ларутӑрӑвӗ татах та ытларах шанчӑксӑрланӗ.

Фашистла нимӗҫ вӑрӑ-хурахӗсем халӗ хӑйсем пӗтсе ларасран ҫӑлӑнса юлма вӗтеленсех майсем шыраҫҫӗ. Германин ҫынсем тӗлӗшпе ресурссем пӗтсе ларнӑ пулин те, вӗсем каллех тылри «тотальнӑй» мобилизацие ярса илнӗ. Фашистсен пуҫлӑхӗсем Гитлера хирӗҫле коалицин лагерӗнчи ҫӗршывсене пӗр-пӗринпе хирӗҫтерсе яма, ҫапла майпа вара вӑрҫа нумай вӑхӑта тӑсма ҫавтери хытӑ тӑрӑшаҫҫӗ. Гитлерӑн дипломачӗсем пӗр нейтральнӑй ҫӗршывран тепӗрне ҫӳреҫҫӗ, Гитлер майлӑ тӑракан ҫынсемпе ҫыхӑнма тӑрӑшаҫҫӗ, пӗрре пирӗн государствӑпа, тепре пирӗн союзниксемпе уйрӑм мир тума пурри ҫинчен сӑмах хушса хураҫҫӗ. Гитлеровецсем ҫакӑн пек хӑтланнинчен нимӗн те тухас ҫук, мӗншӗн тесен Гитлера хирӗҫле коалицин никӗсӗнче союзниксен пурнӑҫри паха интересӗсем выртаҫҫӗ, союзниксем гитлерла Германие тата Европӑри унпа пӗр каварлисене аркатса тӑкас задача лартнӑ. Тӗп интерессем шӑп ҫавӑн пек пӗр пулни ӗнтӗ, вӑрҫӑ пынӑ май, Совет Союзӗ, Англи тата США хушшинчи боевой союза ҫирӗплетет.

Гитлеровецсене вӗсем совет ҫӗрӗ ҫинче тата Европӑри оккупациленӗ ҫӗршывсенче тунӑ мӗнпур тискер ӗҫсемшӗн татӑклӑн тавӑрас сехет ҫывхарса килет.

Хӗрлӗ Ҫар пирӗн халӑх хуҫалӑхӗн пур отраслӗсенче те совет ҫыннисем ҫӗнӗрен чаплӑ ӗҫсем тунине пула ҫӗнтерӳллӗ наступлени тума пултарчӗ. Совет Союзӗнчи ӗҫҫыннисем Хӗрлӗ Ҫарӑн фронтсенчи ҫуллахи ҫӗнтерӗвӗсене тылри производствӑра ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем тунипе тӗреклетрӗҫ.

Пирӗн промышленноҫри рабочисем государство кӑтартса панӑ плансене срокчен тата ирттерсе тултараҫҫӗ, ҫӗнӗ заводсене, домна кӑмакисене, электростанцисене ӗҫе яраҫҫӗ, ирӗке кӑларнӑ районсенче оккупантсем ишӗлтернӗ индустрие калама ҫук кӗске срoксенче юсаса ура ҫине тӑратаҫҫӗ. Рабочи класӑн паттӑр ӗҫӗсем Хӗрлӗ Ҫарӑн ҫарпа пурлӑх базине тата ытларах ҫирӗплетеҫҫӗ, ҫапла туса вӗсем эпир татӑклӑн ҫӗнтерес сехете ҫывхартаҫҫӗ.

Совет хресченӗсем государствӑна ҫарпа хуласемшӗн апат-ҫимӗҫ, промышленность валли чӗртавар параҫҫӗ, Хӗрлӗ Ҫара хӑйсен пурнӑҫне шеллемесӗр пулӑшаҫҫӗ.

Совет интеллигенцийӗ производствӑна сарса пырас тата Хӗрлӗ Ҫар нушисене тивӗҫтерес ӗҫре рабочисемпе хресченсене тӳрремӗнех ертсе пыракан пулӑшу парса тӑрать.

Ирӗке кӑларнӑ районсенчи ӗҫҫыннисем хӑйсене ирӗке кӑларакан Хӗрлӗ Ҫара пулӑшассине кунран-кун вӑйлатса пыраҫҫӗ, фронта каякан грузсен пӗтӗмӗшлӗ юхӑмне ҫӗнӗрен юсаса лартнӑ заводсемпе ялхуҫалӑхӗн продукцине хутшӑнтараҫҫӗ.

Иккӗленмелли ҫук, совет халӑхе, фашистла нимӗҫ захватчикӗсене хӑвӑртрах та пуҫӗпех ҫапса аркатас тесе, хӑйӗн геройла ӗҫӗпе тата хӑйӗн мӗнпур вӑйне хурса, ҫӗршывӑн производствӑллӑ вӑйӗсене татти-сыпписӗр ӳстерсе пыма малашне те пулӑшса тӑрӗ.

Союзлӑ республикӑсенче ҫӗнӗ ҫар формированийӗсене туни, ССР Союзӗнчи халӑхсен Отечественнӑй вӑрҫӑри боевой туслӑхӗпе тата пирӗн государствӑн мӗнпур историйӗпе хатӗрлесе ҫитернӗ ҫак ӗҫ, Хӗрлӗ Ҫара татах та ытларах тӗреклетӗ, унӑн речӗсене ҫапӑҫура кирлӗ ҫӗнӗ вӑйсем хушса парӗ.

Юлташсем — краскоармеецсемпе краснофлотецсем, сержантсем, офицерсемпе генералсем! Партизансемпе партизанкӑсем!

Хамӑрӑн Тӑван ҫӗршыв ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн пыракан ҫак аслӑ вӑрҫӑра эсир тӗлӗнмелле геройлӑх кӑтартса патӑр. Хӗрлӗ Ҫар вӑрҫа тӗпренех хамӑр майлӑ улӑштарчӗ, халӗ ӗнтӗ Хӗрлӗ Ҫар тӑшмана пуҫӗпех ҫӗнтересси патнелле шанчӑклӑн пырать. Тӑшман поражени хыҫҫӑн поражени тӳсет. Анчах ӑна ҫапса аркатман-ха. Гитлерла вӑрӑ-хурахсем, хӑйсен вилӗмӗ ҫывхарса килнине тата хӑйсем пирӗн ҫӗр ҫинче тунӑ ҫав тери тискер те усал ӗҫсемшӗн пуриншӗн те тавӑрас вӑхӑт ҫитсе килнине курса, вилес шӑпа тивнӗ ҫынсен хаярлӑхӗпе хирӗҫ тӑраҫҫӗ. Вӗсем хӑйсен юлашки вӑйӗсемпе резервӗсене ҫапӑҫӑва кӗртсе яраҫҫӗ, совет ҫӗрӗн кашни метрӗнче, кашни майлӑ рубежра тытӑнса юлма пӑхаҫҫӗ.

Ҫавӑнпа та ӗнте, пирӗн ҫитӗнӳсем тем пек аслӑ пулсан та, эпир халичченхи пекех, тӑшманӑн вӑйӗсене тӗрӗс виҫсе тавҫӑрма тивӗҫлӗ, пирӗн сыхӑлӑхлӑ пулмалла, хамӑр хушӑра каппайса, лӑпланса, тимлӗхсӗр пулса ларни пулмалла мар. Тӑшман вилӗм шӑтӑкне хӑй ирӗкӗпе сикни вӑрҫӑсен историйӗнче халиччен пулман-ха. Вӑрҫӑра ҫӗнтерес тесен, тӑшмана вилӗм шӑтӑкӗ патне илсе ҫитерсе, ӑна унта тӗртсе ямалла. Вӑйсене пӗр пӑркаланмасӑр ӳстерсе пырса, аркатмаллах пыра-пыра ҫапнипе кӑна тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрме пулать, ҫакӑ кӑна пире татӑклӑ ҫӗнтерӳ тума май парать. Ҫавна тума боецсен ҫапӑҫури ӑсталӑхне тата пирӗн ҫар командирӗсен вӑрҫӑри мастерлӑхне малалла лайӑхлатса пыни кирлӗ. Хӗрлӗ Ҫарӑн тивӗҫӗ — хӑйӗн вӑрҫӑ искусствине кунран-кун ытларах ӳстерсе пырасси, тӑшманӑн тактикине пӗр чарӑнмасӑр тӗплӗн вӗренсе пырасси, укӑн ирсӗр хӑтланӑвӗсене пӗлсе те вӑхӑтра сиссе илесси, тӑшман тактикине хирӗҫ хамӑрӑн лайӑхрах тактикӑна тӑратасси пулса тӑрать. Хӗрлӗ Ҫарӑн малта пыракан чаҫӗсемпе соединенийӗсен ҫапӑҫури опычӗсемпе ҫитӗнӗвӗсем пирӗн МӖНПУР ҫарсен тивӗҫлӗхӗ пулса тӑни, ПӖТӖМ Хӗрлӗ Ҫар, унӑн боецӗсемпе офицерӗсем ПУРТЕ тӑшмана кучухнехи вӑрҫӑ наукин мӗнпур правилисем кӑтартса панӑ пек ҫӗмӗрме вӗренсе ҫитни кирлӗ.

Юлташсем — красноармеецсемпе краснофлотецсем, сержантсем, офицерсемпе генералсем, партизансемпе партизанкӑсем!

Сире, Хӗрлӗ Ҫар 26 ҫул тултарнӑ ятпа саламласа тата ырӑ сывлӑх сунса, ҪАПЛА ХУШАТӐП:

1. Мӗнпур рядовойсемпе сержантсен составӗн — пехотинецсен, минометчиксен, артиллеристсен, летчиксен, танкистсен, саперсен, связистсен, кавалеристсен — хӑйсен ҫапӑҫури ӑсталӑхне ывӑнма-пӗлмесӗр малалла лайӑхлатса пымалла, хамӑрӑн чаплӑ боевой техникӑпа туллин усӑ курмалла, тӑшмана, ӑна хамӑрӑн мухтавлӑ гвардеецсем ҫапнӑ пекех, ҫапмалла, командирсен приказӗсене тӗп-тӗрӗс пурнӑҫа кӗртсе пымалла, дисциплинӑпа йӗркелӗхе ҫирӗплетсе, организованноҫа ӳстерсе пымалла.

2. Офицерсен тата пур йышши ҫарсен генералӗсен— ҫарсене ертсе пырас искусствӑна, маневрсем тӑвас тактикӑна, ҫапӑҫура мӗнпур тӗрлӗ ҫарсене пӗр-пӗринпе ҫыхӑнтарса, пӗтӗҫтерсе пырас ӗҫе лайӑхлатса пымалла, малта пыракан гвардейски чаҫсемпе соединенисен опытне ҫапӑҫури практикӑна хӑюллӑнрах та анлӑнрах кӗртсе пымалла, штабсемпе ҫар тылӗсен ӗҫӗн культурине чи ҫӳллӗ пусӑма ҫӗклемелле, хамӑрӑн разведкӑна пур енӗпе те лайӑхлатса, аталантарса пымалла.

3. Пӗтӗм Хӗрлӗ Ҫарӑн — хӗҫпӑшал вут-ҫулӑмӗпе маневра пӗлсе пӗтӗҫтерсе пырса, тӑшман оборонине пӗтӗм тарӑнӑшӗпех ҫӗмӗре-ҫӗмӗре тӑкмалла, тӑшмана сывлӑш ҫавӑрма памалла мар, тӑшман контратакӑсем туса пирӗн наступление чарма хӑтланнисене вӑхӑтра пӗтерсе лартмалла, тӑшмана хыҫранах йӗрлесе пырассине пӗлсе организацилемелле, ӑна хӑйӗн техникине турттарса кайма памалла мар, хӑюллӑ маневрсем туса тӑшман ҫарӗсен флангӗсене ҫавӑра-ҫавӑра илмелле, вӗсен тылӗсене шӑтарса кӗре-кӗре каймалла, тӑшман ҫарӗсене хупӑрла-хупӑрла илмелле, вӗсене пайӑн-пайӑн вакламалла, вӗсем хӗҫпӑшала пӑрахма килӗшмесен, пӗтере-пӗтере тӑкмалла.

4. Партизансемпе партизанкӑсен — Хӗрлӗ Ҫара пулӑшассине вӑйлатмалла, тӑшманӑн штабӗсемпе гарнизонӗсене тапӑнмалла, тӑшманӑн тылӗсене ҫӗмӗрмелле, унӑн ҫул-йӗрӗсемпе ҫыхӑнӑвӗсене аркатмалла, тӑшмана резервсем кӳрсе килме майсем памалла мар.

5. Иртнӗ ҫулталӑк хушшинче Совет государствин хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсем тунӑ аслӑ ҫӗнтерӳсене яланлӑхах палӑртса хӑварас тесе, паян, февралӗн 23-мӗшӗнче, Хӗрлӗ Ҫар 26 ҫул тултарнӑ кун, 18 сехетре, Мускавра, Ленинградра, Киевра, Днепропетровскра, Гомельре, Ростовра, артиллерирен ҫирӗм хутчен пӗр харӑс персе, Хӗрлӗ Ҫарӑн паттӑр войскисене салют памалла.

Хамӑрӑн ҫӗнтерӳллӗ Хӗрлӗ Ҫара мухтав!

Совет хӗҫпӑшалне мухтав!

Хамӑрӑн хастар партизансемпе партизанкӑсене мухтав!

Сывӑ пултӑр пирӗн аслӑ Совет Ҫӗршывӗ!

Сывӑ пултӑр пирӗн Пӗтӗм Союзри Коммунистсен Партийӗ — Хӗрлӗ Ҫарӑн аслӑ ҫӗнтерӗвӗсене хавхалантарса, организацилесе пыраканӗ!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ
И. СТАЛИН.

Сывӑ пултӑр Совет халӑхӗ, халӑх-герой, халӑх-воин!

Звенигородка хулинчен кӑнтӑртарахри районра нимӗҫсен наступленине пӗтерсе тӑкнӑ чухне тӑшмана кӳнӗ ҫухатусем тата пирӗн ҫарсем тытса илнӗ трофейӑсем

Нимӗҫсен командованийӗ февралӗн 5-мӗшӗнчен пуҫласа, Звенигородкӑран кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехри района фронтӑн ытти участокӗсенчен 8 танковӑй тата темиҫе пехотнӑй дивизи илсе пырса, Корсунь-Шевченковский районӗнче ҫавӑрса илнӗ нимӗҫ ҫарӗсем патне тул енчен пыра-пыра ҫапса татса кӗме ҫав тери хытӑ тӑрӑшнӑ.

Питӗ пысӑк ҫухату тӳссе, тӑшман Звенигородкӑран кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсен ҫапӑҫури йӗркисем хушшипе кӑштах савӑлланса кӗме пултарнӑ. Ҫакӑ паллӑ: совет ҫарӗсем татӑклӑн хирӗҫ тӑрсан, нимӗҫсем ҫав ҫапӑҫусенче халран кайнӑ та, хӑйсен ҫавӑрса илнӗ группировкине пулӑшма пултарайман, февралӗн 17-мӗшӗнче ҫав группировкӑна вара пирӗн ҫарсем пӗтӗмпех пӗтерсе тӑкнӑ.

Корсунь-Шевченковский районӗнче ҫавӑрса илнӗ нимӗҫсене пӗтерсе тӑкнӑ хыҫҫӑн пирӗн ҫарсем ҫав ҫавӑрса илнӗ группировкӑна пулӑшма хӑтланнӑ нимӗҫ ҫарӗсене пырса ҫапнӑ. Вунтӑватӑ кун хушши ҫапӑҫса, нимӗҫсене ҫӗнӗрен пысӑк поражени тӳстернӗ, ҫак поражени вара нимӗҫсене аркатса тӑкниех пулса тӑнӑ.

Февралӗн 5-мӗшӗпе 21-мӗшӗ хушшинчи ҫапӑҫусенче пирӗн ҫарсем Звенигородкӑран кӑнтӑртарахри районра наступлени туса пыракан нимӗҫ ҫарӗсене ҫакӑн пек ҫухату кӳнӗ:

ПӖТЕРСЕ ТӐКНӐ: самолетсем — 329, танксем—827, автомашинӑсем—1.638, тупӑсем—446. Ҫав ҫапӑҫусенче тӑшманӑн 27.000 салтакпа офицер таран вилнӗ.

ТЫТСА ИЛНӖ: танксем—115, тупӑсем—270, автомашинӑсем — 1.850, бронетранспортерсемпе бронемашинӑсем—50, штаб автобусӗсем — 10. Пирӗннисем 1.500 ҫынна ҫити тыткӑна илнӗ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Совет Информаци Бюровӗнчен

ФЕВРАЛӖН 21-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Февралӗн 21-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем, ЛУГА хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑртарахра тӑшманпа ҫапӑҫса, темиҫе ял туртса илнӗ. Вӗсен шутӗнче — СЕЛИЩЕ, ВОЦКАЯ, КИРИЛЛКОВО, КИЛОШИЦЫ, ВАШКОВО, ИВАНОВСКАЯ, ПОХОНЬ, ГОРОДИЩЕ.

ИЛЬМЕНЬ кӳллинчен хӗвеланӑҫнерехре, кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем ӑнӑҫлӑ наступлени ҫаплах вӑйлатса пынӑ, Ленинград облаҫӗнчи район центрӗсене — СОЛЬЦЫ хулине, ВОЛОТ, ПОДДОРЬЕ, Калинин облаҫӗнчи район центрне — ХОЛМ хулине туртса илнӗ, тата ҫавӑн пекех тӑшманпа ҫапӑҫса халӑх пурӑнакан ытти 100 пункта ытла йышӑннӑ. Вӗсен шутӗнче — БОЛЬШОЙ УТОРГОШ, НИЗОВА, ОСТРОВА, ИГНАТОВО, ЛОПАТУХА, БОЛЬШОЕ ЗАБОРОВЬЕ, МАЛОЕ ЗАБОРОВЬЕ, СВИНОРД, ИЛОВЕНКА, УГОЩА, ЦИПИНО, ГУЩИХА, СУХАРЕВО ялсем тата НИЗЫ, СОЛЬЦЫ, ВЕРЕЩИНО, ШЕЛОНЬ, ВОЛОТ чугун ҫул станцийӗсем.

КРИВОЙ РОГ хули енче пирӗн ҫарсем, наступлени пуҫласа ярса, тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ та ДОЛГИНЦЕВО ятлӑ узловой чугун ҫул станцине туртса илнӗ, ҫавӑн пекех халӑх пурӑнакан 50 пункта ытла йышӑннӑ. Вӗсен шутӗнче — НОВО-ИВАНОВКА, БОЖЕДАРОВКА, ВЕЧЕРНИЙ КУТ, БОЖАНОВО, НОВО-УКРАИНКА, ПОЛТАВЦЫ, АННОВКА, ИВАНОВКА, НОВЫЙ КРИВОЙ РОГ ятлӑ халӑх пурӑнакан пунктсем тата РОКОВАТАЯ, КОЛОМИЙЦЕВО, КАГАНОВИЧ, РАДУШНАЯ ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем. Пирӗн ҫарсем КРИВОЙ РОГ хули патне таччӑнах пырса ҫитнӗ те тӑшманпа хула хӗррипче ҫапӑҫма пуҫланӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведка тунӑ, артиллерипе минометсем персе тӑнӑ тата чылай пунктсенче тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Февралӗн 20-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 40 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 11 самолетне персе ӳкернӗ.

ФЕВРАЛӖН 22-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Февралӗн 22-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем ЛУГА хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑртарахра малалла тапӑнса пынӑ, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта туртса илнӗ. Вӗсен шутӗнче — БУКИНО (СТРУГИ КРАСНЫЕ хулинчен 10 километр ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре), СЕГЛИЦЫ, МАЛЫЕ ЛЬЗИ, БОЛЬШИЕ ЛЬЗИ, ДЕРТИНЫ, БОРОТНО, ВИДОНИ.

ИЛЬМЕНЬ кӳллинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем ӑнӑҫлӑ наступлени ҫаплах вӑйлатса пынӑ, тӑшманпа ҫапӑҫса халӑх пурӑнакан 200 пункта ытла туртса илнӗ. Вӗсен шутӗнче — ДУБРОВО, ГРЕБНЯ, АПРАКСИНО, МОРИНО, СОРОКИНО, МИХАЙЛОВСКИЙ (ДНО хулинчен 16 километр хӗвелтухӑҫнерехре), НОВОЕ ПАНКРАТОВО, КРУТЕЦ, ГЛУХАЯ ГОРУШКА, БАРЕВО, ПЕРЕХОДЫ, ГУСЕВО, ВАШКОВА, БОЛЬШАЯ ПУХОВА, МАЛАЯ ПУХОВА ятлӑ ялсем тата МЯКОВО, МОРИНО ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.

ХОЛМ хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем тӑшманпа ҫапӑҫса малалла куҫса пынӑ, халӑх пурӑнакан 100 пункта ытла туртса илнӗ. Вӗсен шутӗнче — МАЗУРЫ, ГОРКИ ЛЕСОВЫЕ, ЗАХОД, УСАДЬБА, ИВАНИСОВО, СЕЛЕБИНО, ПАЛАШУТИНО.

УКРАИНӐРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем, наступлени туса пырса, хаяр ҫапӑҫусем хыҫҫӑн тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ та февралӗн 22-мӗшӗнче Украинӑри пысӑк промышленность центрне — КРИВОЙ РОГ хулине штурмласа тытса илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведка тунӑ, артиллерипе минометсем персе тӑнӑ тата чылай пунктсенче тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Февралӗн 21-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 48 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 8 самолетне персе ӳкернӗ.

Хӗрлӗ Ҫарӑн генералӗсемпе офицерӗсене Суворов тата Кутузов орденӗсемпе наградӑлани

Боевой операцисене ӑста та пӗлсе, хӑюллӑ ертсе пынӑшӑн тата фашистла нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан ҫапӑҫусенче ҫав операцисене пула тунӑ ҫитӗнӳсемшӗн СССР Верховный Совет Президиумӗн Указӗ тӑрӑх наградӑланӑ:

1-мӗш степень Суворов орденӗпе — генерал-лейтенанта И. Т. Коровникова, арми генералне К. А. Мерецкова;

1-мӗш степень Кутузов орденӗпе — генерал-майора И. М. Викторова, артиллери генерал-лейтенантне Г. Е. Дегтярева, генерал-лейтенанта Ф. П. Озерова, генерал-лейтенанта С. В. Рогинские, генерал-лейтенанта Т. Ф. Штыкова;

II-мӗш степень Суворов орденӗпе — 5 ҫынна;

II-мӗш степень Кутузов орденӗпе — 6 ҫынна наградӑланӑ. (ТАСС).

Хӗрлӗ Ҫарпа Тинӗс-Ҫар Флочӗ 26 ҫул тултарнӑ ятпа Шупашкарта пулса иртнӗ чаплӑ лару

Ӗнер Советсен Ҫуртӗнче Хӗрлӗ Ҫарпа Тинӗс-Ҫар Флочӗ 26 ҫул тултарнӑ ятпа республика столицинчи партипе совет тата общество организацийӗсен чаплӑ ларӑвӗ пулса иртрӗ.

Лару президиумӗнче—ВКП(б) Обкомӗн секретарӗсем Чарыков, Белков, Андреев, Иванов юлташсем, Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн председателӗ Андреева юлташ, республика Совнаркомӗн председателӗ Матвеев юлташ, ВКП(б) горком бюровӗн членӗсем, Шупашкар хула Совет исполкомӗн председателӗ Аникин юлташ, ҫар чаҫӗсен тата хулари предприятисен представителӗсем.

Хисеплӗ президиума тӑвӑллӑн алӑ ҫупса ВКП(б) Центральный Комитечӗн Сталин юлташ ертсе пыракан Политбюро составне суйлаҫҫӗ.

Хӗрлӗ Ҫарпа Тинӗс-Ҫар Флочӗ 26 ҫул тултарни ҫинчен Фортунатов подполковник доклад туса парӗ.

Чаплӑ лару пысӑк хавхаланупа Верховный Главнокомандующи Совет Союзӗн Маршалӗ Сталин юлташ патне ята хатӗрленӗ саламлӑ ҫырӑва йышӑнчӗ.

Лару хыҫҫӑн концерт пулчӗ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Авиаци Маршалне А. А. Новикова ҫар званийӗ—авиацин Главнӑй Маршалӗн ятне парасси ҫинчен

Авиаци Маршалне Александр Александрович Новикова ҫар званийӗ — авиацин Главнӑй Маршалӗн ятне парас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 ҫулхи февралӗн 21-мӗшӗ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Артиллери Маршалне Н. Н. Воронова ҫар званийӗ—артиллерин Главнӑй Маршалӗн ятне парасси ҫинчен

Артиллери Маршалне Николай Николаевич Воронова ҫар званийӗ—артиллерин Главнӑй Маршалӗн ятне парас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 ҫулхи февралӗн 21-мӗшӗ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Артиллери генерал-полковникне Н. Д. Яковлева ҫар званийӗ—артиллери Маршалӗн ятне парасси ҫинчен

Артиллери генерал-полковникне Николай Дмитриевич Яковлева ҫар званийӗ—артиллери Маршалӗн ятне парас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 ҫулхи февралӗн 21-мӗшӗ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Бронетанковӑй ҫарсен генерал-полковникне Я. Н. Федоренкӑна ҫар званийӗ—бронетанковӑй ҫарсен Маршалӗн ятне парасси ҫинчен

Бронетанковӑй ҫарсен генерал-полковникне Яков Николаевич Федоренкӑна ҫар званийӗ — бронетанковӑй ҫарсен Маршалӗн ятне парас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 ҫулхи февралӗн 21-мӗшӗ

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Бронетанковӑй ҫарсен генерал-полковникне П. А. Ротмистрова ҫар званийӗ—бронетанковӑй ҫарсен Маршалӗн ятне парасси ҫинчен

Бронетанковӑй ҫарсен генерал-полковникне Павел Алексеевич Ротмистрова ҫар званийӗ — бронетанковӑй ҫарсен Маршалӗн ятне парас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 ҫулхи февралӗн 21-мӗшӗ

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-полковникне И. Т. Пересыпкина ҫар званийӗ—ҫыхӑну ҫарӗсен Маршалӗн ятне парасси ҫинчен

Ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-полковникне Иван Терентьевич Пересыпкина ҫар званийӗ — ҫыхӑну ҫарӗсен Маршалӗн ятне парас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН

Мускав, Кремль. 1944 ҫулхи февралӗн 21-мӗшӗ

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Инженернӑй ҫарсен генерал-полковникне М. П. Воробьева ҫар званийӗ—инженернӑй ҫарсен Маршалӗн ятне парасси ҫинчен

Инженернӑй ҫарсен генерал-полковникне Михаил Петрович Воробьева ҫар званийӗ — инженернӑй ҫарсен Маршалӗн ятне парас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 ҫулхи февралӗн 21-мӗшӗ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Совет Союзӗн Маршалӗсене С. М. Буденныя, К. Е. Ворошилова, Б. М. Шапошникова Суворов орденӗсемпе наградӑласси ҫинчен

Верховный Главнокомандовани хушнӑ ӗҫсене ӑнӑҫлӑн туса пынӑшӑн наградӑлас:

1-мӗш степень Суворов орденӗпе

1. Совет Союзӗн Маршалне Семен Михайлович БУДЕННЫЯ
2. Совет Союзӗн Маршалне Климентий Ефремович ВОРОШИЛОВА
3. Совет Союзӗн Маршалне Борис Михайлович ШАПОШНИКОВА.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 ҫулхи февралӗн 22-мӗшӗ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Хӗрлӗ Ҫар генералӗсене орденсемпе наградӑласси ҫинчен

Верховный Главнокомандовани хушнӑ ӗҫсене ӑнӑҫлӑн туса пынӑшӑн наградӑлас:

1-мӗш степень Суворов орденӗпе

Генерал-полковника Александр Сергеевич ЩЕРБАКОВА

1-мӗш степень Кутузов орденӗпе

1. Арми генералне Алексей Иннокентьевич АНТОНОВА
2. Генерал-полковника Филипп Иванович ГОЛИКОВА
3. Генерал-полковника Михаил Степанович ГРОМАДИНА
4. Генерал-полковника Иван Васильевич СМОРОДИНОВА

II-мӗш степень Суворов орденӗпе

Генерал-полковника Сергей Матвеевич ШТЕМЕНКАНА

II-мӗш степень Кутузов орденӗпе

1. Артиллери генерал-лейтенантне Василий Васильевич АБОРЕНКОВА
2. Артиллери генерал-лейтенантне Петр Алексеевич ДЕГТЯРЕВА.

Хӗрлӗ Ялав орденӗпе

Генерал-лейтенанта Иван Иванович ИЛЬИЧЕВА.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав Кремль. 1944 ҫулхи февралӗн 22-мӗшӗ.

Хӗрлӗ Ҫар генералӗсемпе офицерӗсене Суворов тата Кутузов орденӗсемпе наградӑлани

Боевой операцисене ӑста пӗлсе тата хӑюллӑ ертсе пынӑшӑн тата фашистла нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан ҫапӑҫусенче ҫав операцисене пула тунӑ ҫитӗнӳсемшӗн СССР Верховный Совет Президиумӗн Указӗ тӑрӑх наградӑланӑ:

1-мӗш степень Суворов орденӗпе — арми генералне Л. А. Говорова, генерал-лейтенанта Д. Н. Гусева, генерал-лейтенанта А. А. Жданова, генерал-лейтенанта В. П. Свиридова;

1-мӗш степень Кутузов орденӗпе — танковӑй ҫарсен генерал-лейтенантне В. И. Баранова, генерал-майора Г. К. Буховеца, инженернӑй ҫарсен генерал-майорне Б. В. Бычевские, генерал-майора А. Б. Гвоздкова, генерал-лейтенанта А. А. Кузнецова, генерал-полковника И. И. Масленникова, артиллери генерал-лейтенантне Г. Ф. Одинцова, генерал-майора А. С. Цветкова;

II-мӗш степень Суворов орденӗпе — 25 ҫынна;

II-мӗш степень Кутузов орденӗпе — 39 ҫынна наградӑланӑ. (ТАСС).

Хӗрлӗ Ҫарӑн офицерӗсене, сержанчӗсене тата рядовойӗсене Совет Союз Геройӗн ятне пани

Нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан кӗрешӳ фронтӗнче Командованин боевой заданийӗсене кӑтартуллӑн пурнӑҫланӑшӑн тата ҫавӑн чухне хастарлӑхпа паттӑрлӑх кӑтартнӑшӑн СССР Верховный Совет Президиумӗн 1944 ҫулхи февралӗн 21-мӗшӗнчи Указӗ тӑрӑх, Хӗрлӗ Ҫар офицерӗсен, сержанчӗсен тата рядовойӗсен пӗр ушкӑнне, Ленин орденӗпе тата «Ылттӑн ҫӑлтӑр» медальпе наградӑласа, Совет Союз Геройӗн ятне панӑ.

Совет Союз Геройӗн ятне мӗнпурӗ 12 офицера, сержанта тата рядовоя панӑ. (ТАСС).

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗнчен

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ К. Н. Леселидзе генерал-полковник Мускаври ҫар госпиталӗнче 1944 ҫулхи февралӗн 21-мӗшӗнче вӑхӑтсӑр вилни ҫинчен хуйхӑрса пӗлтерет. Ку госпитале К. Н. Леселидзе генерал-полковника грипп шала кайнине пула пуҫланса кайнӑ йывӑр чире тӳрлетме фронтран илсе килсе вырнаҫтарнӑччӗ.

Леҫҫен Кавказ фрончӗн Ҫар Совечӗ, Грузи ССР-ӗн Совнаркомӗ тата Грузи ЦК КП(б) ыйтнипе К. Н. Леселидзе генерал-полковника Тбилиси хулинче пытараҫҫӗ.

К. Н. Леселидзе генерал-полковник ятне ӗмӗре хӑварма Тбилиси хулинче ӑна памятник лартаҫҫӗ.

Гвардеец Игнатий Арюхин

Пӗррехинче Арюхин тӑракан подразделени вырнаҫнӑ ҫӗре тӑшман танксен пысӑк вӑйне кӳртсе янӑ. Анчах хӑюллӑ воинсем хӑраса ӳкмен, вӗсем танксене ҫывӑхах ҫитерчӗ те пур орудирен те тӑвӑллӑн пеме пуҫланӑ. Танксем пӗрин хыҫҫӑн тепри малалла кайма чарӑннӑ. Ҫак ҫапӑҫура кӑна Арюхин ертсе пыракан оруди расчечӗ тӑшманӑн 3 танкне ҫунтарса янӑ тата чылай гитлеровецсене пӗтерсе тӑкнӑ.

Каярахпа Игнатий Арюхин Сталинград патӗнчи ҫапӑҫусенче пулать. Командовани хушнӑ заданисене кашниначех ӑнӑҫлӑн пурнӑҫлать. Ҫапла, пӗр ирхине совет войскисем вырнаҫнӑ пункта тӑшман ҫавӑрса илме шутланӑ. Арюхин приказ илнӗ: «Тӑшманӑн ҫулне пӳлмелле, ӑна малалла куҫма чармалла!»

Тӑшман хытӑран та хытӑ пеме пуҫланӑ. Гитлеровецсем пысӑк вӑйпа тапӑннине совет воинӗсем лайӑх курса тӑнӑ, анчах вӗсем пӗр ҫирӗп ӗмет тытнӑ: тӑшмана ку расра та пӗтерсе тӑкмалла.

Хӗрӳллӗ ҫапӑҫура орудисен командирӗ вилет. Ун вырӑнне ҫамрӑк командир Арюхин тӑрать. Каярахпа тата ытти юлташсем те аманаҫҫӗ, стройран тухаҫҫӗ. Арюхин 4 боецпа ҫеҫ тӑрса юлать.

—Хыҫра Сталинград, пӗр утӑм та каялла чакмалла мар! — команда парать вӑл. Боецсем командир сӑмахне чыслӑн пурнӑҫлаҫҫӗ. Вӗсем кашни патрона перекетлесе, ӑна тӑшман ҫине яраҫҫӗ.

Ҫапӑҫу шӑп пӗр талӑка пырать. Тӑватӑ паттӑр воин ҫак 24 сехет хушшинче сахал мар гитлеровеца тата унӑн техникине пӗтерсе тӑкаҫҫӗ. Талӑк ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн совет воинӗсем патне пулӑшу ҫитет, вара Арюхин ҫӗнӗ вӑйсемпе пӗрле малалла наступлени туса каять.

Ҫак операци хыҫҫӑн хӑюллӑ командир Игнатий Арюхин Ленин—Сталин партийӗ ретне кӗме ыйту парать. «Ҫапӑҫура хӑравҫӑ пулмастӑп, Ленин—Сталин парти ӗҫӗшӗн мӗн пур вӑя, кирлӗ пулсан пурнӑҫа паратӑп» тесе ҫырать вӑл хӑйӗн заявленийӗнче.

Ӑна парти ретне илеҫҫӗ. Хастарлӑ командир Игнатий Арюхин коммунист пулса тӑрать.

ВКП(б) ретне кӗни ҫамрӑк командира ҫӗнӗ вӑй хушать. Вӑл пӗлет, халь унӑн хӑйӗн сӑмахне тӳрре кӑлармалла. Ку таранччен вӑл ҫапӑҫура хӑйуллӑ та пултаруллӑ пулнӑ, малашне татах та хӑюллӑрах, хастартарах, паттӑртарах пулмалла.

Оруди расчечӗсем ӗҫлемен вӑхӑтра е тӑшман лӑпланса, Арюхин юлташ разведкӑна каять, хамӑрӑн командовани валли кирлӗ сведенисем илсе килет.

...Сивӗ каҫ. Тӗттӗм, таврара нимӗн те курӑнмасть. Ҫурҫӗртен хаяр ҫил вӗрет. Тӑратӑн та ҫиле хирӗҫ, антӑхсах каятӑн.

Ҫак каҫхине часть командирӗн приказне пурнӑҫлама Арюхин юлташ тӑшман тылне каять. Унӑн тӑшман тылне 7 километра ҫити шала кӗрсе кайса, нимӗҫсен гарнизонне пӗтерсе тӑкмалла. Мӗнле майпа? Ӑна Арюхин часах тавҫӑрса тупать. Вӑл 14 боеца илсе, вӗсене автоматсемпе, гранатӑсемпе хӗҫпӑшалланатарать, унтан вара шӑппӑн тӑшман вырнаҫнӑ блиндажсем патне илсе каять. Вырӑна ҫитсен, вӗсем икшерӗн уйӑрӑлаҫҫӗ те юр ӑшне чавса кӗре-кӗре выртаҫҫӗ. Арюхин хӑй блиндажсене пӑхса ҫӳрет. Унччен те пулмасть, сывӑхрах Арюхин сасси янӑраса каять.

— Огонь по гитлеровским собакам, — команда парать вӑл.

Таврара харӑссӑн пӑшал, пулемет сассисем кӗрлесе каяҫҫӗ. Кунта пӗр гитлеровец та тарса пытанаймасть, кашниех вилӗм тупать. Пилӗк блиндажа ҫӗмӗрнӗ хыҫҫӑн совет боецӗсем улттӑмӗш патнелле ыткӑнаҫҫӗ.

—Кунта пемелле мар, пире «чӗлхе» кирлӗ,—тет Арюхин. Пӗлнӗ пекех, юлашки блиндажӗнче чи кирлӗ «чӗлхесем» ларнӑ иккен. Ытлашши ӗҫсе алхаснӑ хыҫҫӑн самаях ӗшенмӗ пулас вӗсем. Совет боецӗсем кӗрсен ҫеҫ вӗсен куҫӗсем уҫӑлаҫҫӗ, анчах тарма ҫук. 11 офицер ирӗксӗрех тыткӑна параҫҫӗ.

—Приказа пурнӑҫланӑ, тӑшманӑн 11 офицерне, хӑйсен ҫар хатӗрӗсемпе пӗрлех, тыткӑна илнӗ, хамӑрӑннисенчен ҫухату ҫук!—рапортлать Игнатий Арюхин хӑйсен чаҫне каялла таврӑнсан.

Ватӑ командир хӑй умӗнче тӑракан Игнатий Арюхин ҫине ӑшшӑн пӑхса илнӗ те, ун патне пырса ӑна алӑ тытнӑ.

— Маттур, сана кушшӑн командовани совет правительствин хаклӑ наградине илме тӑратӗ,—тенӗ командир.

Игнатий Григорьевич Арюхин Сталинград хулине хӳтӗлекен паттӑрсенчен пӗри. Вӑл тӑватӑ уйӑх хушши фронтӑн малти позицийӗсенче ҫапӑҫать. Ҫапӑҫу хирӗнче пӗр хут ҫеҫ мар хӑюлӑхпа паттӑрлӑх кӑтартать. Ҫавӑншӑн совет правительстви ӑна Отечественнӑй вӑрҫӑн II-мӗш степеньлӗ орденӗпе тата «За оборону Сталинграда» медальпе наградӑлать. Ҫакӑнти ҫапӑҫурах вӗсен соединенине гвардейски ят параҫҫӗ. Арюхин юлташа старши сержант званине параҫҫӗ.

Чаплӑ воинӑн кӑкрине халӗ Отечественнӑй вӑрҫӑн II-мӗш степенлӗ орденӗ, «Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр» орденӗ тата «За оборону Сталинграда» медальпе гвардейски значек илемлетсе тӑраҫҫӗ. Ҫав хаклӑ наградӑсемпе Арюхин ҫеҫ мар, вӑл ҫуралса ӳснӗ Ҫӗмӗрле районӗнчи Кӗҫӗн Тӑван ялӗнчи ҫынсем те мухтанаҫҫӗ.

Х. ЛИСИН.

Ответлӑ редакторӑн заместителӗ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСЕ: г. Чебоксары, ул Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0— 67, секретарьпе заместителӗн — 4—26, парти пурнӑҫ пайӗн — 3—99, промышленноҫпа ялхуҫалӑх пайӗсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00043 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз